# Ачасен прависене хÿтĕлесе

Çула çитменнисен прависене хÿтĕлесси, ачасене хирĕçле преступленисене тата вĕсене саккунсăр ĕçсене явăçтарассине асăрхаттарасси – влаçăн пĕтĕм структурисен, йĕрке хуралĕн органĕсен тата обществăлла организацисен ĕçĕ-хĕлĕн тĕп енĕсенчен пĕри. Çула çитменнисем тĕлĕшпе тунă йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене кăçалхи январьтен пуçласа РФ Следстви комитечĕн следователĕсем тишкереççĕ.

2011 çулта тата кăçал акă Çĕмĕрлери следстви пайĕн сотрудникĕсем ку ушкăнри сакăр уголовлă ĕçе пăхса тухнă. Ачасем асլисене ĕненнипе, япăххиչе-ыррине тĕрĕс уйăрса илейменнипе, хăйне мĕнпе те пулин илĕртекенсене шаннине пула шар кураççĕ. Хамăр районтах пĕр ялта çула çитмен ача паллакан хĕрачана хăй патне чĕнсе илнĕ те килне вăйпах туртса кĕнĕ, ăна арлăх тĕлĕшĕнчен пусахланă. ЧР Аслă сучĕ ăна айăплă тесе йышăннă.

Районти полици сотрудникĕ ÿсĕрле руль умне ларса çул çинче тепĕр машинăпа çапăннă тĕслĕх те пулнă. Ку инкекре тăваттăри ачан сывлăхĕ йывăр сиенленнĕ.

Çемьере ачасем йывăр лару-тăрура пурăнни, сывăх çыннисемех вĕсене хирĕç преступленисем тунă тĕслĕхсем те пур. Çĕмĕрлери следстви пайĕ хальхи вăхăтра акă Çĕмĕрлере 35-ри ашшĕ пĕчĕк хĕрачине хĕн кăтартса пурăнни пирки пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерет.

**Хамăр инф.**

*Саламлатпăр!*



Июнĕн 6-мĕшĕнче **Çăкаллă Явăшра пурăнакан Александра Афанасьевна ВЛАДИМИРОВА** хăйĕн çуралнă кунне паллă тăвать. Сăпайлă хĕрарăма, ырă кăмăллă аннене, вашават кукамая тата савнă мăшăра пурте пысăк салам яратпăр! Çуралнă кун ячĕпе Сире!

**Анне – çак сăмахпа ялан**
**Манпа пĕрле хамăрн атте.**
**Вĕсен ăшши чунра ялан**
**Мĕн виличчен пирнпе пĕрле!**
**Аттен, аннен ăш кăмăлне,**
**Вĕсен таса юратăвне,**
**Пире ăс панă вăхăтне**
**Упрасчĕ пирĕн ĕмĕрне!**
**Ÿстернĕ пилĕк ачине**
**Вĕсем савса чун-чĕререн.**
**Пил панă кăмăллă пулса**
**Ялан малти ретре пулма.**
**Ятланă пуль кăшт хушăран,**
**Чунсем кÿтсе пит çитнĕрен.**
**Юратнă пуль чун-чĕререн,**
**Телей сунса ыр кăмăлтан.**
**Тавах сире, анне, атте!**
**Эсир пурри вăл пирн телей**
**Пуласчĕ пирĕн сирĕн пек.**
**Упрасчĕ сирн юратăва.**
**Ял-йышăмра чысра эсир,**
**Ĕçченлĕхпе, сăпайлăхпа.**
**Пурнсамăр эсир нумай çул,**
**Пире кăтартăр тĕрĕс çул.**
**Эпир ялан сирн пек пулма**
**Тупа тăватпăр нумай çул!**

***Пысăк салампа Смирновсем, Филипповсем, Петровсем, Владимировсем, юратнă мăшăрĕ тата тăванĕсем.***

Пирĕн хаклă тăванăмăр – **Çăкаллă Явăшра пурăнакан Александра Афанасьевна ВЛАДИМИРОВА** – июнĕн 6-мĕшĕнче çуралнă кунне паллă тăвать. Вĕсем мăшăрĕпе Василий Владимировичпа çур ĕмĕр ытла пĕр-пĕрне ăнланса пурăнаççĕ. 5 ача ÿстерсе тĕрĕс çул çине тăратнă, хăйсем пекех ĕçчен те ырă кăмăллă пулма вĕрентнĕ.

Ялта вĕсене хисеплеççĕ. Эпир те вĕсенчен вĕренсе пыма, ырă тĕслĕх илме тăрăшатпăр. Эпир вĕсене вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, яланхи пекех кăмăллă пулма сунатпăр. Ачисемпе тата мăнукĕсемпе пĕрле савăнса пурăнма телейлĕ малашлăх сунатпăр.

**Ырă сунса çуралнă кун ячĕпе саламлакансем – мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем тата тăванĕсем.**

# Чăвашла пĕлекен тĕнчене пĕлет...



*Мĕнле чăваш пулчĕ ку? Юрлать, ташлать,*
*гитарипе хăй вылять!*
*А.С.ПУШКИН.*

**Чăваш чĕлхин çулленхи эрнинче унăн урокĕнче эпĕ пĕрре кăна мар пулнă. Литература пÿлĕмне хальхинче 10-мĕш классенче вĕренекенсем 36-ăн пухăнчĕç. Тирпейлĕ, илемлĕ, вăй питти, савăк йыш. Поэт-и, ăсчах-и – камран кам пуласси çак ÿсĕмре çирĕпленет. Хальхи яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç ку саманара икĕ-виçĕ чĕлхе е ытларах та шĕкĕлчет. «Чăвашла каланине, вуланине сирĕнтен хăшĕ аванах ăнланаять – алă çĕклĕр-ха», – терĕм. Эп капла кĕтменччĕ: чăваш чĕлхи пĕриншĕн те ютă мар! Чăвашла сăвăлакан та, чăвашла хаçат-журнал пăхкалакансем те пур. Район хаçатне пурте пекех пĕлеççĕ. «Тем тесен те учителĕн пархатарлă ĕçĕ ку», – шутларăм ăшăмра. Чăваш сăмахлăхĕпе ачасем пуçламăш классенче çывăхланнă. Кайран вара чăваш литературин классикĕсене вырăсла вулаççĕ. Римма Алексеевна çав вăхăтра сăвăсене чăвашла та калаттарать, хăш пĕр текст чăвашла мĕнле янăранине тăнлама хушать. Ку тĕл пулура Алексей Воробьевăн икĕ сăввине чăвашла хăй вуларĕ.**

**ХАЛĂХ ШКУЛĔ**

Мана паллă ентешĕмĕрĕн юбилейĕ çывхарнă сăлтавпа чĕннĕ. Сăмах майĕпе ачасене поэтăн чăвашла тата Мускавра вырăсла тухнă кĕнекисемпе паллаштартăм, шкул çулĕнчи çамрăксене халалланă кĕнекеме парнелĕх алă пусса саламларăм. Çак хушăра кăсăклă кăмăл çурални курăнчĕ. Çыравçă кун-çулне, пултарулăхне харпăр хăй еккипе пĕлесшĕннисем пулаççех ĕнтĕ.

Р.А.Павлова вĕрентекенĕн кредо тĕлĕшĕнчи шучĕпе – вĕренекенте интерес тĕвĕлемешкĕн мел-ăслай тупмалла. Интерессен хĕлхемĕнчен хыпнă çулăм сÿнмест. Кашниййĕнех çут çанталăк пилленипе йăх-ăратран килекен хăйне майлă пултарулăх пур. Ача хăй тавçăрайнă-ши ăна, анчах ашшĕ-амăшĕн, вĕрентекенĕсен сисмелле. Пĕлмеллех. Çавна ăнкарса шута илнинчен аталанать пулас педагог ăсталăхĕ. Пурнăç çулне Тур пÿрнĕ йĕрпе суйласа илме пулăшнăшăн учителе тав тăвакансем пайтах.

Акă çар службинче Ростовра мотострелоксен полкĕнче тăракан Саша Гусев чăвашла шăрçаласа темиçе хутчен вăрăм çырусем янă. Чи çывăх тăванне шаннă пекех – пĕтĕмпех тĕпĕ-йĕрĕпе çырать. «Электрик халь эпĕ. Сире малалла вĕренме шантарнăччĕ. Çыхăну техникумне кĕретĕп. Майăн 6-мĕшĕнче 19 тултартăм. Тек йывăр мар ĕнтĕ. Тулĕк кунта пĕтĕмпех вырăсла. Чăвашла сирĕн урокри пек калаçас килет. Чĕлĕм туртма хĕсĕрлерĕç. Çук, туртмастăп. Тавах Сире, Римма Алексеевна, çырăвăрсемшĕн, пире ĕретлĕ çын тума тăрăшнăшăн. Эсир манăн анне пек – ун пекех ăшă, ырă, таса...»

Синкерлĕ саманта астутарни те пур. Пĕлтерĕшлĕ самант вăл. Р.Павлова Вурнаркăран поселока таврăннă. Пуйăс ĕрĕхтерсе-кăшкăртса килет. Пĕрскер лини урлă выртнă-мĕн. «Ун патне пăлан пек сиксе ÿкрĕм, – асилет Римма Алексеевна. – Арçынна куç кĕрет вилĕмрен туртса илтĕм... Чăвашăн ухмахла пĕтме юрамасть, тетĕп. Çаврăнса пăх-ха – тĕнчен тăвата енĕ те ырă-çке, тетĕп».

Хам тÿссе курнă: «вырăсланакан» халăхра ашшĕ-амăш те тăван чĕлхепе калаçманнисен ачи-пăчине чăвашла вĕрентме пĕрре те ансат мар. Çурма вырăс шкулĕнчи чăвашла вĕрентĕвĕн тăвалли лавне Римма Алексеевна пархатарлăн, чăтăмлăн тапса туртать. Çирĕм çул хушшинче ăс-пурлăх материалне нăк пухса тултарнă. Темăсене кура калăпланă папкăсем. Чăвашла дисксем. Электронлă кĕнекесем. Этнокультура тĕслĕхĕсем... Унăн кабинечĕ смотр-конкурсра районта 1-мĕш, республикăра 4-мĕш вырăна тухнă. Ку пÿлĕмри пуянлăхпа авăрланнă ачана чăвашла пĕлмест тесе калаймастăн. Уроксем – программăпа картнинчен анлăрах. Никам та калаçăва хутшăнмасăр юлмасть. Кашни урок валли тĕсесе пăхмалăх, тытса пахаламалăх, сÿтсе явса хакламалăх япала тупăнать. Вăйă меслечĕпе йĕркеленĕ уроксене сăвă-юрăпа, халăх сăмахлăхĕпе, наци йăли-йĕркипе пуянлатаççĕ. Ушкăнсене пайланса ăмăртасси, конкурссем, викторинăсем, наука-практика конференцийĕсем, олимпиадăсем ирттересси йăлара. Пултару лаççи – «Тăван ен – Вăрнар ен» кружок тĕрлĕ классенчи ачасене пĕрлештернĕ. Учительсем, районтисем те, Римма Алексеевнăн уçă урокĕсене хапăлласа йышăнаççĕ.

Пĕтĕмĕшле ăнăçупа пултарулăх ачасемпе тĕллĕн-уйрăмшарăн тата класпа шкул тулашĕнче ÿркенмесĕр ĕçленĕрен пухăнса туптанать. Р.Павлован ĕлкĕрсе пырайман ача çук. Ертÿçĕ шучĕпе ăна 10-мĕш «Т» класа (лицей шайĕнчи техника класĕ) шанса панă. Вун пĕр хĕр ачапа вун пĕр каччăран вун улттăшĕ отличник е ударник. Лена Павлова – Президент стипендиачĕ. Степан Прохоров шашкăлла выляса Пĕтĕм Раççейри ăмăртусенче çĕнтернĕ. Ирина Иванова, Юлия Михайлова, Сергей Данилов, Ольга Кузьмина, Таня Яштайкина, Алиса Григорьева конкурссемпе олимпиадăсенче пĕр хутчен кăна мар палăрнă. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче сочиненисен «Тăван ен çинчен мĕн пĕлетĕп?» конкурсĕ активлă иртнĕ, О.Кузьмина республикăра та 1-мĕш вырăна тухнă.

Иван Никифорович Никифоров ячĕпе хисепленекен шкулта япăх ĕçлеме, начар вĕренме юрамасть. Герой-учитель Чăваш çĕршывĕн пĕрре кăна. Чăвашлăх урокĕсене Римма Алексеевна çултан çулах унпа паллаштарнинчен тытăнать. Паллă-чаплă çынсем ку шкултан сахал мар тухнă. Вĕсене ачасем ĕмĕрлĕхе асра хăвармалăх пĕлччĕр. Аслă тĕнчене тухмалли çамрăк çыншăн малтан çывăхран çывăх Вăрнар енĕ, унтан вара, анлăланса, Чăваш çĕрĕ-шывĕ уçăлтăр. Тăван сăртлăхран тавралла тинкерÿллĕн сăнама хăнăхни тĕнче инçĕшне куратех. Хăй камне-ăçтанне, халăхĕн шăпи-ăраскалĕ тавралли кун-çулне ăса хывнă çын чăвашран çуралнăшăн, чăваш çĕрĕнчен тухнăшăн пăшăрханса мĕскĕнленмест, халăхсен черченкĕ çураçулăхне (толерантлăхне, тейĕпĕр) тÿрккессĕн тĕкĕнмест. Паллах, учителĕн хăйĕн те вĕçĕмрен вĕренме тивет. Чăвашăн тăвата енлĕ тĕнчине вĕренекенĕсемпе пĕрле малалла уçмашкăн вара çĕр-çĕр тĕрлĕ факт алла килĕ. Чăваш тĕнчи мĕншĕн-ха тăвата енлĕ? Еврейсен – виçĕ ен. Якутсен – çавра... Тупсăмне пĕррехинче чăваш халăх художникĕпе, ячĕ-сумĕ вун-вун çĕршыв урлă тĕнчене тухнă Праски Виттипе пĕрле шыраpĕç. Р.Павлова илĕртнипе ачасем унăн выставкисене çитсе курнă, символлă ÿкерчĕксене ăнланасшăн ăнтăлса шухăшсен авăрĕнче асапланнă. Аслăрах ачасем 19-мĕш ĕмĕрте кун çути курса 20-мĕш ĕмĕрте Совет Союзĕнче чыс-хисеп туяннă А.Кокеле те («кукăль» сăмахран) пĕлеççĕ-мĕн. Алексей Афанасьевич чăваш мадоннисене чипер сăнарланă. Унăн картинисене Шупашкар, Горький, Мускав, Ленинград, Хусан, Ĕпхÿ, Ульяновск, Саранск хулисенче кăтартнă. 1916 – 1956 çулсенче художник Харьковра пурăннă, художество институтне, Украинăри художниксен ассоциацине ертсе пынă. Асăннă икĕ ÿнерçĕ-профессор хушшинче чăвашлăха сăнланă ытти художниксем мĕн чухлĕ!

Культурăпа искусствăн анлă анине Вăрнар тăрăхĕнчен тухнисем мĕн чухлĕ! Ентешĕмĕр-писателĕн Вл.Кузьминăн вĕсемпе паллаштаракан кĕнекисене («Илем çăлтăрĕсем», «Под радугой дружбы», ыттисем) учитель ал айĕнчех тытать. Ăслă та Аслă чăваш 18-мĕш ĕмĕрти Никита Бичуринпа ку ĕмĕрти Геннадий Волков хушшинче мĕн чухлĕ! Ку академиксем тăван чăваш чĕлхисĕр пуçне тата вунă чĕлхе пĕлнĕ-çке! Ун йышшисене, И.Я.Яковлев евĕрлĕ улăпсене, учителĕн программа хушмасăрах пĕлмелле. Пĕлмелле те – ăслăлăх ылтăн-кĕмĕлне воспитанникĕсене парнелемелле. «Хăй халăхне пĕлменни – педагог мар!» Геннадий Никандрович сăмахĕ ку. «Тăвата Юрату пур манăн, – тенĕччĕ вăл. – Валерий Чкалов, Юрий Гагарин, Андриян Николаев, Николай Гаврилов». (Николай Федорович – Канаш чăвашĕ, Раççей Федерацийĕн Геройĕ, генерал-лейтенант, хăрушсăрлăхпа оборона академийĕн вице-президенчĕ). Çавнашкал юрату, ахăртнех, кашни ачан, кашни çыннăн пулмалла. Нумай академисен хисеплĕ членĕ хăйĕн 80 çулхи юбилейĕнче ытларах Петĕр Хусанкая чыс тума йăлăннă. «Хусанкай пирĕншĕн Атте те, Турă та», – тенĕ. Мĕншĕн апла каланă-ши? «Ыйтăва хуравлама пĕрлешсе вăй хурăпăр», – тет ун пек чухне учитель. Г.Волковăн тепĕр юбилейĕнче А.Г.Николаев космонавт таса чăваш чĕлхипе тунă доклада вырăссем çеç мар шăп-шăпăрттăн тăнласа ларнă. Ав еплерех вĕсем – чăвашсем! Пирĕн Андриян космос чĕлхине пĕлнĕ, наукăсен чĕлхине шĕкĕлченĕ. Чăвашла пĕлекен вун-вун чĕлхе те вĕренĕ (вăтăр ытла чĕлхе пĕлнĕ В.Г.Егоров, ыттисем). Чăвашла пĕлекене тĕнче пĕлет (тĕрĕк чĕлхисене тĕпченĕ Н.И.Ашмарин, ыттисем). Ку çула Вăрнар çыравçисен юбилейлă çулталăкĕ терĕмĕр те, çамрăксемшĕн П.Ялкир феноменĕ те, А.Емельяновăн пророкла каларăшĕсем те, хаяр вăрçăпа айăпсăртан тĕрме асапне тÿснĕ А.Воробьевăн ăш-пиллĕ çынлăхĕ те чăнласа питĕ интереслĕ... Викторинăсем, сочинени калăпĕнчи хайлавсем ачасене харпăр хăй еккипе ĕçлеме хистеççĕ.

Аслă категориллĕ вĕрентекен. Чи лайăх учительсен республикăри конкурсĕн çĕнтерÿçи. Ăна Чăваш Республикин, Раççей Федерацийĕн Вĕрентÿ министерствисен Хисеп грамотисемпе наградăланă.

**М.ВАСИЛЬЕВ.**

**СТАТИСТИКА**

Çулталăк пуçламăшĕ тĕлне Чăваш Республикинче граждансен харпăрлăхĕнчи 216 пин автомобиле шута илнĕ. Ку 2010 çулхипе танлаштарсан 7 процент ытларах. Юлашки пилĕк çулта автомобильлĕ çынсен шучĕ 1,4 хут ÿснĕ. Граждансен харпăрлăхĕнче ытларах (86 %) – çăмăл автомашинăсем, 12 проценчĕ – груз турттаракан машинăсем, 2 проценчĕ – автобуссем.

Автомобиль тытакансенчен ытларахăшĕ – Шупашкарта (76,9 пин), Çĕнĕ Шупашкарта (21,9 пин), Шупашкар (11,6 пин), Улатăр (10,7 пин), Çĕмĕрле (8,8 пин), Патăрьел (8,3 пин) районĕсенче пурăнакансем.

2011 çулта харпăрлăхçăсенчен 1000 çын пуçне 150 автомашина тивĕçет (2010 çулта – 139), урăхла каласан, республикăри кашни çиччĕмĕш çыннăн хăйĕн автомобиль пур. Пилĕк çул каялла кашни вуннăмĕш çыннăн автомашина пулнă.

